Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

19 (7444) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи мартăн (пуш) 7-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Ыран – Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ТЕ ХАКЛĂ ХĔРАРĂМСЕМ!**

Сире çывхарса килекен çурхи чи пĕрремĕш çутă та илемлĕ уявпа - Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çуркунне çут çанталăк ассăн сывласа ярать, пĕтĕм тĕнче чĕрĕлет. Çавăнпах пуль çак уяв та çуркунне пуçламăшĕпе пĕр килет. Çĕр çинче мĕн пур ырри, таси, асамли, илемли, хисеплĕ аннесемпе асаннесем, юратнă мăшăрсем, аппасемпе йăмăксем, йăлтах сирĕнпе çыхăннă. Пурнăç та сирĕнтенех пуçланать. Çут çанталăк хĕрарăма ачисене кун-çул парнелесе, этемлĕх йăхне малалла тăсмалли тивĕçе парнеленĕ. Эсир ывăл-хĕрĕрсене тĕрĕс воспитани парассишĕн ырми-канми тимлетĕр. Раççей Федерацийĕн Правительстви ачаллă çемьесене пулăшмалли мерăсене лайăхлатни хăех çĕршывра хĕрарăм мĕн тери хисепре пулнине кăтартса парать. ЧР Президенчĕ Н. В. Федоров ЧР Патшалăх Канашне янă Çырура та, хисеплĕ хĕрарăмсем, сирĕншĕн чи хаклă та çывăх туйăма – ачасене, ача амăшĕсене пулăшассине тĕпе хунă. Çавăнпах ĕнтĕ 2007 çула та Ача çулталăкĕ, тенĕ.

Хисеплĕ те юратнă хĕрарăмсем, мĕн тери çепĕçлĕх, ачашлăх сирĕнте. Çав вăхăтрах, ытарайми илемлĕ хĕрарăмсем, хурçă пек çирĕплĕх, çивĕчлĕх, иксĕлми вăй-хал тапса тăрать. Аннесемпе асаннесем умĕнче эпир Аслă Отечественнăй вăрçăра тунă Аслă Çĕнтерӳшĕн, тылри паттăр ĕçшĕн ĕмĕр парăмра. Паян та, кирек хăш ĕçре вăй хурсан та, кирек хăш отрасльте тăрăшсан та, ĕçченлĕхпе, пултарулăхпа тата тăрăшулăхпа палăрса тăратăр, ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăватăр. Хĕрарăмсăр, хĕрарăмăн çепĕç алли перĕнмесĕр пурнăçланакан ĕç çук та пулĕ. Йывăрлăхсене çĕнтерсе пыратăр. Район аталанăвĕшĕн вăй хуратăр. Тавах сире çакăншăн.

Эсир тĕнчене, кил-çурта çемьене ырлăхпа килĕшӳ, телей, лăпкăлăх кӳретĕр. Сирĕн чун ăшши, чун тасалăхĕ, ыттисене ăнланни пире вăй парса тăрать. Иксĕлми чăтăмлăхăрпа пултарулăхăршăн тав тăватпăр, сирĕн умăрта пуç таятпăр.

Пĕтĕм чунтан сире çирĕп сывлăх, ăнăçупа ӳсĕм, телей, шанчăк, ĕненӳ, юрату сунатăп. Сирĕн сăн-питĕрте яланах йăл кулă çиçтĕр, ăна тĕксĕмлетекен пĕр сăлтав та ан пултăр. Ачăрсем сире савăнăç çеç кӳччĕр, вĕсен пурнăç çулĕ телейлĕ пултăр. Ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр, шухăшлани пурнăça кĕтĕр. Çемйĕрти ăнлану пурнăçăр çулне уçса пытăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**



***Çурхи пĕрремĕш уяв пĕтĕм тĕнче ыйхăран вăраннă тапхăрпа тӳр килни хĕрарăм илемне татах та çӳлерех çĕклет, ăна хаклама пĕлекенсене экономика аталанăвне сулмаклă утăмсемпе малалла уттарма вĕрентет. Урăхла епле-ха, пĕтĕм ӳсĕме илем никĕслет. Хĕрарăмăн черченкĕ те ăшă кулли вара кирек епле ĕçре те çĕнтерӳ пуçламăшĕ.***

***Культура училищине вĕçленĕренпе районти Культура çуртĕнче тата Чуманкасси вăтам шкулĕпе Сосновкăри вĕрентӳпе культура центрĕнче хореограф пулса ĕçлекен тата çак ăсталăха çамрăксене вĕрентекен Людмила Юрьевна Яргунькинана (сăн ӳкерчĕкре) çак çурхи уявпа саламлатпăр.***

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Ыр кăмăллăх

# «Ачалăх ячĕпе, йăлтах ачалăхшăн»

Пĕтĕм республикăри пекех, пирĕн районта та çак ятпа февралĕн 19-мĕшĕнчен тытăнса мартăн 19-мĕшĕччен ыр кăмăллăх марафонĕ иртет. Ют инкек, ют хуйхă пулма пултараймасть. Уйрăмах нушаллă пурăнакан ачасем пирки çакна каламалла. Çавна май çак ыр кăмăллăх марафонне хутшăнса чылайăшĕ кун пек çемьесене май килнипе укçатенкĕпе те, тумтир таврашĕпе те пулăшма тăрăшать.

Ĕнерхи кун тĕлне ятарлă счет çине районти социаллă хӳтлĕх пайĕ 3700 тенкĕ, çынсен социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен центр 1700 тенкĕ, район администрацийĕн финанс пайĕ 1140 тенкĕ, «Восток» хуçалăх 500 тенкĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов 1000 тенкĕ, РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ 3010 тенкĕ, «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» МУП 350 тенкĕ, Муркаш ял тăрăхĕн администрацийĕ 570 тенкĕ, выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци 5000 тенкĕ, налук инспекцийĕн районти уйрăмĕ 1500 тенкĕ куçарса панă. Пĕтĕмпе вара 18470 тенкĕ.

Ыр кăмăллăх çӳпçине укçа-тенкĕ хывнисĕр пуçне тумтир таврашĕпе пулăшакансем те çук мар. Кунта пенсионеркăна, унччен район хаçатĕнче ĕçленĕ А.А. Чернована, «Район администрацийĕн централизациленĕ бухгалтерийĕ» муниципаллă учрежденин бухгалтерне Г.И. Александрована, ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне В.Г. Данилова, районти ĕçпе тивĕçтерекен центрăн ертсе пыракан инспекторне Н.Г. Сафиуллинана, район администрацийĕн ЗАГС пайĕн пуçлăхне М.П. Рубцована асăнмалла.

Марафон вĕçленмен-ха. Çак пархатарлă та ырă ĕçе пурин те хутшăнма тăрăшасчĕ. Ыр кăмăллăха малашне те çухатас марччĕ.

**Н. ПЕТРОВА,**
**социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ.**

## Официально

# Проводятся публичные слушания

Администрация Моргаушского района совместно с Министерством природных ресурсов и экологии Чувашской Республики проводят публичные слушания по теме «Обоснование инвестиций завершения строительства Чебоксарского гидроузла» 20 марта 2007 года в зале заседаний администрации Моргаушского района. Начало слушаний в 10 часов.

## Конкурс

# “Çамрăк çемье – сывă çемье”

Çак ятпа ирттерме палăртнă район администрацийĕ çамрăк çемьесем хушшинчи конкурса. Ăна Муркаш районĕнче чи лайăх çемьене палăртас тĕлĕшпе йĕркелеççĕ.

Конкурса 2007 çул тăршшĕпех ирттерме палăртнă. Унăн пĕрремĕш тапхăрĕнче (март-апрель) çемье альбомĕсене тишкерĕç. Çакăнта çемье историйĕ, йăх тата çемье традицийĕсене тĕпчени, фотоматериал, çемьери çынсен çитĕнĕвĕ пирки палăртни кирлĕ. Иккĕмĕш тапхăрта (сентябрь) “Манăн пурнăç девизĕ” ятпа çамрăк çемьесен конференцийĕ иртĕ. Виççĕмĕш тапхăрта çемьери пĕр çын професси ăсталăхĕн конкурсне хутшăнĕ. Тăваттăмĕш тапхăр (ноябрь) – “Çамрăк çемье – сывă çемье” çамрăк çемьесен фестивалĕ пулĕ.

Конкурса хутшăнас кăмăллисен заявкăсене тата çемье альбомĕсене 2007 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕччен тăратмалла.

## Район 63 çул тултарчĕ

# Ĕçре те маттур, уявра та сатур

***(Район кунне халалланă савăнăçлă пухуран)***

Февралĕн 10-мĕшĕнче тăван районăмăра йĕркеленĕренпе 63 çул çитрĕ. Район кунне савăнăçлă лару-тăрура уявласси тахçанах йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Çавна май мартăн 2-мĕшĕнче район кунне уявлама Шупашкарти К. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш академи драма театрне хуçалăхсен, предприятисемпе организацисен ертӳçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, тĕрлĕ отрасльсенче вăй хуракан пултаруллă та хастар ĕçченсем, хăнасем йышлă килсе çитрĕç. Ытларахăшĕ тата пушă алăпа мар.



**«Муркаш районĕн хисеплĕ гражданинĕ» ята тивĕçнисем.**

Фойене кĕрсенех пысăк уяв туйăмĕ çупăрласа илет. Вĕрсе каламалли инструментсен оркестрĕ илемлĕ кĕвĕсем шăрантарать. Стенасем çине район пурнăçĕ, унăн паллă çыннисем пирки каласа паракан стендсем, сăн ӳкерчĕксем вырнаçтарнă, чăваш сурпанĕсен «Халăх юрри-кĕвви тĕрĕсен вылявĕнче» выставкине, халăх тата ачасен пултарулăх ĕçĕсен куравне йĕркеленĕ. Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен предприятийĕсем, кунти çăкăр завочĕ хăйсен продукцине сĕнеççĕ. Курав залĕнче вара районăн 2006 çулхи пурнăçĕпе социаллă аталанăвĕ пирки видеофильм кăтартассине йĕркеленĕ.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

## Иртнĕ çул итогĕсемпе çĕнтерне

**Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2007 çулхи февралĕн 26-мĕшĕнчи 70 № йышăнăвĕпе иртнĕ çул итогĕсемпе предприятисем, организацисем тата ял тăрăхĕсем хушшинчи экономика ăмăртăвĕнче çаксем çĕнтерне тесе палăртнă:**

**I. Ял хуçалăх предприятийĕсем хушшинче:**

1-мĕш вырăн – **Ильич яч. хис. хуçалăх;**

2-мĕш вырăн – **«Свобода» хуçалăх;**

3-мĕш вырăн – **«Оринино» хуçалăх.**

«Герой» тата «Восток» хуçалăхсем лайăх ĕçленине палăртнă.

**II. Промышленность тата продукци тирпейлекен предприятисем хушшинче:**

1-мĕш вырăн – **акционерсен «Сеспель» хупă обществи;**

2-мĕш вырăн – **Муркаш райповĕ;**

3-мĕш вырăн – **чикĕллĕ яваплăхлă «Вита» общество.**

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн «Моргаушское» муниципаллă предприятийĕ тата чикĕллĕ яваплăхлă «Моргаушимежрайгаз» общество лайăх ĕçленине палăртнă.

**III. Ял тăрăхĕсем хушшинче:**

1-мĕш вырăн – **Йӳçкасси ял тăрăхĕ;**

2-мĕш вырăн – **Уйкас Янасал ял тăрăхĕ;**

3-мĕш вырăн – **Чуманкасси ял тăрăхĕ.**

Москакасси ял тăрăхĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

Призлă вырăн йышăннă предприятисене, организацисене тата ял тăрăхĕсене дипломсем тата укçан премисем çак виçепе панă:

– 1-мĕш вырăншăн – 1-мĕш степеньлĕ диплом тата 12000 тенкĕ;

– 2-мĕш вырăншăн – 2-мĕш степеньлĕ диплом тата 8000 тенкĕ;

– 3-мĕш вырăншăн – 3-мĕш степеньлĕ диплом тата 5000 тенкĕ.

## Уяв йыхравĕ

# Хĕл ăсатăвне чĕнеççĕ

Мĕн тăвăн, çут çанталăкăн хăйĕн саккунĕсем. Тĕрĕссипе февральте чăн-чăн хĕл кунĕсем килсе çитрĕç кăна пулин те, хĕле ăсатма та вăхăт çитрĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ мартăн 5-мĕшĕнче кăларнă 79 № йышăнупа килĕшӳллĕн хĕл ăсатăвĕн уявĕсем **Муркашра мартăн 8-мĕшĕнче, Мăн Сĕнтĕрте мартăн 11-мĕшĕнче** иртеççĕ. Районти хĕл ăсатăвĕн уявне ирттерме оргкомитет йĕркеленĕ, ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пырать.

Муркашра уяв 11 сехетре, Мăн Сĕнтĕрте 9 сехетре пуçланать. Программăра район администрациĕн пуçлăхĕн, ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисен тата хăнасен салам сăмахĕсем, художество пултарулăх коллективĕсен ташши-юрри, такмак юрлакансен, купăс калакансен, вăйă конкурсĕсем, лаша кӳлнĕ çунасен конкурсĕ, тĕрлĕрен спорт ăмăртăвĕсем, сăрт çинчен ярăнасси т. ыт. те.

Килсе курăр уява, кичем пулмĕ никама та.

## Юбилей

# *Саламлатпăр*



Пиккикасси ялĕнче пурăнакан **Анна Васильевна ВАСИЛЬЕВАНА** 70çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Юратнă анне, кукамай, асанне, сана çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, çемье ăшши, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: 3 ывăлĕ, 3 кинĕ, хĕрĕ, кĕрӳшĕ, 11 мăнукĕ, 2 мăнукĕн кĕрĕвĕсем, 2 правнукĕ.**

---

Районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци пуçлăхĕн çумне, ветврач- эпизоотолога **Галина Тимофеевна КИРИЛЛОВАНА** сумлă юбилей – 55 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатăп. Ветеринари ĕçĕнче вăл районта нумай çул вăй хурать. 1978–1997 çулсенче ветеринари лабораторийĕнче пĕрле ĕçлерĕмĕр. Çак вăхăтсенче вăл врач-бактериолог пулса ĕçлерĕ. Хăйĕн ĕçне лайăх пĕлекен специалист.

Галина Тимофеевна! Пурнăçу тулăх та вăрăм, сывлăху çирĕп пултăр, тĕллевӳсем пурнăçланччăр, ĕçре ăнăçу сунатăп.

**Салампа лаборантка пулса ĕçленĕ Вера Вершкова.**

---

Юратнă аннене, мăшăрăма, хунямана, ырă кăмăллă кукамая, хисеплĕ тăхлачăна – Çурлатăри ялĕнче пурăнакан **Людмила Ивановна ИЛЛАРИОНОВАНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эсир пурнăçунта тунă ĕçӳ, сирĕн пуян ăс-хакăлу, уçă кăмăлу пирĕншĕн пысăк телей. Паян кун та эсир хастар, ĕçчен, тăрăшуллă пулнишĕн эпир çав тери савăнатпăр. Аслă Турă сире çирĕп сывлăх, нумай пурăнма телей патăрччĕ, питĕр çинче ăшă кулă çиçтĕр яланах.



Çулсем иртни ан кӳтĕр тунсăх,
Вăй-халу пултăр иксĕлми.
Сана сунатпăр ырлăх-сывлăх,
Тата телей нихçан сӳнми.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕ, мăшăрĕ, кĕрӳшĕ, 2 мăнукĕ, хăти-тăхлачисем тата çывăх тăванĕсем.**

---



Шанчăклă та ырă чунлă маттур çыннăмăра, Отаркка ялĕнче пурăнакан **Петр Иванович АФАНАСЬЕВА** 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Хаклă та юратнă çыннăмăр! Телейлĕ пул, çакна эсĕ чăннипех те тивĕçлĕ. Мĕн ĕмĕтленни яланах çитсе пытăр, сывлăху çирĕп, утас çулу такăр пултăр. Турри сана нумай çул усратăр, нихçан та ан чирле. Ачусемпе мăнукусем савăнăç кăтартчăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 5 ывăлĕ, 3 кинĕ, мăнукĕсем, аппăшĕсем, хăти-тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**